**Свеклу** отварите в шкурке и очистите. Натрите на крупной терке и разложите в небольшие банки по «плечики». Залейте горячим маринадом (на литр воды по столовой ложке соли, сахарного песка и 9 процентного уксуса) и закатайте. Банки переверните и укутайте. Храните в холодильнике, используя по мере необходимости.

Из мелкого **картофеля** можно приготовить крахмал. Для этого чистые клубни, не очищая, пропустите через мясорубку, залейте кипяченой водой (на одну часть картофеля две части воды) и, размешав, сразу же слейте в банку. Отжим выбросьте. Вода в банке должна отстояться. На дне образуется осадок - это крахмал. Чтобы придать ему белизну, воду в банке надо несколько раз поменять. Потом слить ее, а крахмал рассыпать на лист белой бумаги и высушить на воздухе.

❂ Спорт

# В КУГЕСЯХ - ТУРНИР ГАЗЕТЫ "ХЫПАР"

20-21 ноября в Кугесях запланировано проведение ХХ1 Всероссийского турнира по гиревому спорту на призы республиканской газеты "Хыпар".

В помещении редакции этой газеты прошло первое заседание оргкомиссии по подготовке и проведению соревнования, который вел его председатель, глава администрации нашего района А.П.Князев. На заседании было принято положение по проведению турнира и рассмотрены некоторые организационные вопросы.

Следующее заседание оргкомиссии пройдет 4 ноября в здании администрации Чебоксарского района.

***В.ГАВРИЛОВ.***



Фото Г.СЕМЕНОВА.

***Поистине неутомимым человеком, душой и телом преданным физкультуре и спорту, смело можно назвать тренера по легкой атлетике ДЮСШ управления образования районной администрации Тамару Николаевну Федорову. Она помимо выполнения своей основной работы в школе постоянно принимает активное участие в качестве члена судейской коллегии при проведении различных спортивных мероприятий как в районе, так и в республике.***

# ЗА ТОРГОВЛЮ САМОГОНОМ

***Налоговики и милиционеры будут вместе брать с поличным торговцев самогоном. В сентябре-октябре они провели несколько рейдов по предупреждению и пресечению незаконного оборота алкогольной продукции в нашем районе.***

Наш район у правоохранительных органов на особом контроле из-за большого количества нарушений. На этот раз привлечены к ответу шестеро торговцев самодельным зельем - жители села Синьялы, деревень Шобашкаркасы, Ягудары и Янкасы.

На любителей легкого заработка составлены протоколы по Закону «Об административных правонарушениях в Чувашской Республике». Им придется заплатить штраф в размере от 1,5 до 2 тысяч рублей.

***Управление МНС России по ЧР.***
***«Советская Чувашия» от 28 октября.***

❂ Стихи в конверте

## РАЗМЫШЛЕНИЯ

*Как в синь небесную в глаза*
*Твои в раздумьях улетаю,*
*Но вдруг внезапная гроза,-*
*Пронзенной птицей умираю...*

*За что жестоко так обжег?*
*Не объяснившись, подло бросил?!*
*Измазал грязью мой порог*
*И в снегопад ушел как осень.*

*И вьюги за окном метут,*
*Но в сердце боль не остывает.*
*Подружки домыслы плетут,*
*Никто меня не понимает.*

*Воспоминанья не мечты,*
*Они от грусти не спасают,*
*Но твои милые черты*
*Из дум моих не исчезают.*

***Мальвина ВИТКОВА,***
***с.Большой Карлыган.***

## РАЗЛУКА

*Мой друг, я скоро уезжаю*
*Сыграет марш и поезд отойдет*
*Вернусь ли я пока не знаю,*
*Увижу все, как время подойдет.*

*Мне жаль, что в жизни не сложилось,*
*Мне жаль любовь, что мы не сберегли,*
*Но что поделать - так уж получилось,*
*Ведь сохранить все это мы могли.*

*Могли, но что теперь об этом,*
*Зачем напрасно душу свою рвать,*
*Но все же я скажу тебе при этом,*
*Что я с надеждой встречи буду ждать.*

***Галина КАПИТОНОВА,***
***п. Кугеси.***

# КАНМА ТА, ĔÇЛЕМЕ ТЕ ПĔЛЕÇÇĔ

**Районти халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр аслă класри шкул ачисене вĕренӳрен пушă вăхăтра ĕçе явăçтарассипе тимлет. Район администрацийĕн пуçлăхĕн кăçалхи 303-мĕш номĕрлĕ йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн центр 14-18 çулхи ачасене обществăлла ĕçе хутшăнтарассипе ятарлă программа хатĕрлесе çирĕплетнĕ. Унта çулталăк вĕçĕнче ĕçсене пĕтĕмлетес, çĕнтерӳçĕсене палăртса хавхалантарас тĕллевпе конкурс йĕркелессине те асăннă. Пĕрремĕш - «Чи лайăх шкул ачисен ĕç бригади» слечĕ ытлари кун Кӳкеçри культура çуртĕнче иртрĕ.**

Слета районти халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи Л.Пахомов уçрĕ, программăра палăртнă тĕллевсем епле пурнăçланса пынипе паллаштарчĕ. Кăçал октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 600 ачана ĕçе вырнаçтарассипе вăтăр тăвата тĕрлĕ организаципе килĕшӳ тунă. Çуллахи каникул вăхăтĕнче ачасем уйрăмах - «Атлашевский» ЯХК (90 ача), Ленин ячĕллĕ хуçалăх (12), «Новинка» (20), «Туслăх» (10) фермер хуçалăхĕсенче, «Искра» ЯХПК (18), «Чурачикский» ЯХПК (20), Куйбышев ячĕллĕ хуçалăх (20), «Букет Чувашии» агрофирма (20), «Атăл» ЯХПК (6) - уй-хирĕнче пиçĕхнĕ. «Хуçалăхсенче ал вăйĕ çитменнине шута илсен çакă шăпах икĕ енĕшĕн те выrăнлă: пĕрисем ĕçлесе илме пултараççĕ, теприсем пулăшăва туяççĕ»,- пĕлтерчĕ Леонид Пантелеймонович. Унсăр пуçне 14-ăн Ишлейри «Вира Плюс» ОООна, 24-ăн Кӳкеçри «Чувашское» ПКТБ-на хăйсен тăрăхне тирпей-илем кĕртессипе, 32-ĕн «Зеленьстрой» МУП теплицийĕнче чечек пăхассипе, 20-ĕн «Заготовитель» ОООра эмель курăкĕ пухассипе тимленĕ. Ачасем тăрăшуллă та хастар ĕçлени куç кĕрет. Хуçалăхсене вĕсем 100-135 тонна утă типĕтсе панă, 7-18 гектар çĕр çинче выльăх кăшманне, ытти пахча çимĕçе çум курăкран тасатса сайратнă, 8 тоннăна яхăн эмел курăкĕ пухса типĕтнĕ. 11 ушкăнран тăваттăн «Чи лайăх ĕç бригади» ятне - «Эрон» (Ишлей шкулĕ), «Бригантина» (Тренккасси), «Одуванчик» (Ишек), «Сорванец» (Чурачăк) тивĕçнĕ. Вĕсене райадминистраци, районти халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи ятĕнчен социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ А.Константинов тата Л.Пахомов диплом парса чысларĕç.

Палăртма кăмăллă, хĕрӳ тапхăрта шкул ачисен вăйĕпе усă куракан предприяти ертӳçисемпе представителĕсем ерçӳ тупса вĕсене саламлама пултарнă. Кашниех тав сăмахĕ каланă май асăнмалăх парнесем пачĕç. «Эсир - пирĕн малашлăх. Ӳлĕмрен те пĕр-пĕрне ăнланса, килĕштерсе ĕçлессе, çыхăну татах та çирĕпленсе пырасса эпир туйса, ĕненсе тăратпăр. Вăхăт çитсен сире хамăр район тăрăхĕнчи предприятипе организацинче, уй-хирте курасса шанатăп»,-терĕ Ленин ячĕллĕ хуçалăх ертӳçи С.Егоров. Ку шухăш ыттисен сăмахĕнче те палăрчĕ.

**И.ВАСИЛЬЕВА.**

Почта

# ПĔРИНЧЕН ТЕПРИ МАТТУР

**Кĕрхи сивĕ кунсем те çитрĕç. Кашни кунах тенĕ пек çумăр çăвать. Нумайăшĕ йĕпе-сапаран хăраса ытларах вăхăта пӳлĕмре ирттерме тăрăшать. Хаçат валеçекенĕн вара ăна пăхса тăма вăхăт çук. Паян пушшех те - çырăнтару планне тултармалла-çке.**

Республикăра, районта пичетленекен периодика изданийĕсене районта почтальонсем паянхи кун тĕлне 3073 экземпляр çырăнтарнă, плана 18,6 процент тултарнă. Хаçат-журнал çырăнтарассипе хальлĕхе Çатракасси çыхăну уйрăмĕ малта пырать. Вĕсем планланă 640 экземплярĕнчен 275-шне хатĕрленĕ те. Кунта, паллах, Е.В.Яковлева тӳпи те пур. Çакăнтан 145 экземплярне çеç Елена Владимировна çитес çур çулта халăх патне çитересси паянхи куна паллă.

Ишексем те Çатракассисенчен юласшăн мар - палăртнин 32,2 процентне тултарнă. Хальлĕхе 1470-рен 474 экземплярĕ хăйсен хуçисене тупассине çирĕппĕнех калама пулать. Кунта вара малти лава Н.С.Григорьева туртать. Наталия Сергеевна 29 çул ĕнтĕ çынсене ăстăн апачĕллĕ тăвать. Çак çулта миçе мăшăр ată-пушмак çĕтмен-ши почтальонка. Çуран утнин вара тăршшĕн хисепне те шутласа кăларăс çук. Районти почтамтри ертӳçĕн çумĕ З.В.Иванова та ун çинчен ыррине çеç каларĕ: «Наталия Сергеевнана тахçантанпах пĕлетĕп. Вăл вырăнти çыхăну уйрăмĕнче ертӳçĕре те, оператортa та ĕçлерĕ. Халĕ халăха периодика изданийĕсемпе тивĕçтерет. Мĕн каласшăн - кирек ăçта та хăйне шанса панă ĕçе тĕплĕн, тивĕçлипе пурнăçлать. Паян та çырăнтарупа малтисенчен пĕри вăл. Плана 67 процент тултарнă». Р.Г.Гаврилова та ĕçтешне хăваласах пырать - хаçат-журнал çырăнтарассине 53,3 процента çитернĕ. Кунта А.И.Васильева та хисепе тивĕç. Апполинария Ивановнăшăн почтальонка ĕçĕ çĕнĕлĕхку енĕпе вăл сентябрь уйăхĕнчен çеç вăй хума пуçланă. «Çырăнтару вăл почтальонăн чи пысăк тивĕçĕ. Çын мĕнле ĕçлени çакăнтан курăнать те. Çавна май кашни киле кĕрсе тухатăн, пĕрре çеç мар тата»,- тет А.Васильева.

Ишексем кăçал иккĕмĕш çур çулта хаçат-журнал илсе тăмашкăн районти çыхăну уйрăмĕсем хушшинче чи нумай çырăнтаракансем пулнă. Почтальонкăсен калаçăвĕнчен çакна хальхинче те тытса пырасси сисĕнчĕ.

Тутаркассисене те мухтамалăх пур. Кунта вăй хуракан Л.Г.Егорова хаçат валеçекен периодика изданийĕсене 400 экземпляртан ытларах çырăнтаракан районта пĕртенпĕр почтальонка. Апла пулсан, ыттисен унран тĕслĕх илмеллех.

**А.СУСМЕТ.**



Г.СЕМЕНОВ фото ӳкерчĕкĕ.

**А.И.Васильевапа Н.С. Григорьева почтальонкăсене Ишек тăрăхĕнче пурте пĕлеççĕ.**

Чернобыль салтакĕсем

# ЙЫВĂР ПУЛСАН ТА ЧĂТ, МИШША!



Г.СЕМЕНОВ фото ӳкерчĕкĕ.

**Мăн Чăкăр ялĕнче пурăнакансем ăна яланхилле Çемен Федоровчă Мишши тесе чĕнеççĕ. Ырă кăмăллă та вашават çын халăхра чăн та хисепре. Тĕл пулсан сăмах хушмасăр, сывлăх сунмасăр иртмест. Хам çуралнă килпе кӳршĕллĕ пурăнакан Мишшапа эпĕ те калаçма юрататăп, пурнăçĕ, сывлăхĕ çинчен ыйта-ыйта пĕлетĕп. Сывлăх тенĕрен, М.С.Федоров унпа ытлашши мухтанмасть, тепĕр чух кӳлешсе: "çав Чернобыль çур пурнăçа илсе кайрĕ", тени те пулкалать.**

Вара пирĕн калаçу ирĕксĕрех тахçанхи 80-мĕш çулсенчи синкерлĕ лару-тăру çине куçать.

- Шупашкарти агрегат заводĕнче ĕçленĕ вăхăтра 1988 çулхи июльте мана васкавлă майпа хулари çар комиссариатне чĕнсе илчĕç,- аса илет вăл.- Тӳрех каламарĕç пулин те, çар ретне çĕнĕрен тăма тивни Чернобыльпе çыхăннине ун чухнех ăнланса илтĕм. Пирĕн Балтика тинĕсĕ тăрăхĕнчи çар округĕн Бессонов подполковник ертсе пыракан чаçре службăра пулма тӳр килчĕ. Ун чух эпир Киев облаçĕнчи Полесское районти Диброво ялĕнче тăнă. Чернобыльтен тухакан автомашинăсене санитари тĕлĕшĕнчен тасатнă çĕре хутшăннă. Ытлах та радиаци вăйлă лекнĕ транспорта çĕр айне тем тарăнăш чавса хупланă. Вĕсенчен нумайăшĕ паян кун та унтах ĕнтĕ.

Çумра дозиметрсем пур чух та пулман темелле, хама миçе рентген радиаци сиенĕ лекнине тĕплĕн халь те пĕлместĕп. Анчах çулсем иртнĕ май сывлăх палăрмалла хавшани сисĕнет... Ара кунне утмăла яхăн машина çуса тасататтăмăрччĕ вĕт. Чăвашран эпир пĕр чаçре вуннăн пулнăччĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри вăхăтсăр çĕре кĕни çинчен хурлăхлă хыпар илтетĕп те чун пусăрăнать.

Çакна та палăртмалла, вăхăчĕ иртсе пынăран-ши, юлашки тапхăрта Чернобыль салтакĕсем çинчен сайра хутра çеç аса илме пуçларĕç. Питĕ шел. Вĕсене манăçа хăварни никама та чыс тумасть. Вĕсем çĕршывăн хăрушсăрлăхĕшĕн тăрăшса чи пахине - сывалăха хавшатнă-çке. Апла-тăк чернобылецсене тимлĕх тăтăшах кирлĕ. Мишшана вара туслăн çапла калас килет: "Йывăр пулсан та, чăт, пуçна ан ус, утакан çын валли çул уçăлатех".

**Г.ЕГОРОВ.**

**М.С.Федоров чернобылец.**

Хамăръялсем

# ЛЯВА НЕСĔЛĔ

**Камсем пулнă-ха 1904 çулта хăйсен килĕнче шкул, Çĕньял-Покровскинчи пĕрремĕш шкула уçтарма килĕшнĕ Леонтьевсем, мĕнле ырă енсемпе татах палăрнă вĕсем?**

Лява (Леонтий) ывăлĕсем Михали тата Якуркка ачаранах килти ĕçсене пĕлсе туса пыма хăнăхнă, ялти ĕçчен те ăслă-тăнлă çынсем пулнă. Михали Ункă çинче шыв арманĕ туса лартнă. Анатри арман тенĕ ăна. Питĕ вăйлă çын пулнă тет Михаил Леонтьевич: арман чулĕсене хăех вырăнтан вырăна куçарнă, ултă пăт таякан михĕсене ним мар çĕкленĕ. Каламалла, Леонтьевсем пурте патмар çынсем.

Ырми-канми ĕçлесе М.Л.Леонтьев ял варринче тĕреклĕ хуçалăх çавăрать. Ултă кĕтеслĕ пӳртĕнче шкул уçма сĕнсен хирĕçлемест (шкулĕ архива училище ятпа кĕрсе юлнă). Хутла пĕлни пурнăçра кирлĕ пуласси лайăх ăнланнă Михаил Леонтьевич. Арăмĕ, Анна ятлăскер, Çĕнçуртран пулнă. (Ĕлĕк хĕрсене ытларах чух аякри ялсенчен качча илес йĕрке пулнă). Вĕсен ачисем Якку, Ухваниç, Варвари тата Лукари шкул пĕтернĕ хыççăн та хаçат-журнал, кĕнеке вулама пăрахман.

Ухваниç вара тĕрлĕрен брошюрăсем тăрăх тухăçлă пахча-çимĕç туса илес, выльăх-чĕрлĕх пăхас ыйтусене хăйне халлĕн тĕпчеме пуçлать. Çамрăк чух Афанасий Михайлович (Ухваниç Михалччă тесе чĕннĕ ăна) ашшĕне пулăшать, кайран хăй те арман хуçи пулса ĕçлет. Пĕрремĕш тĕнче вăрçине ăна 35 çулта чух илсе каяççĕ. Икĕ ачапа тăрса юлнă Анастасия (Мамăш хĕрĕ) мăшăрне тепĕр виçĕ çултан тин кĕтсе илет.

Октябрьти революци хыççăн Афанасий Михайловича арманта мельник пулса малалла ĕçлеме ирĕк параççĕ. 1932 çулта вара Леонтьевсен кил-çуртне, кĕлетсене сӳтсе куçарса каяççĕ (ял совечĕ, медпункт пулнă çуртсем). Вунă çула яхăн Афанасий Михайлович арăмĕпе тата икĕ хĕрĕпе (ывăлĕсем, Германпа Кронид, ачаллах чирлесе вилнĕ) пахчари мунчара пурăнаççĕ. Пĕр вăхăт Атăл çывăхĕнчи ялта арманта ĕçлет. Колхозсем пуçлансан ăна сад ĕрчетме хушаççĕ, садпа пахча çимĕç бригадине ертсе пыма уйăрса лартаççĕ. Шанчăклă çын пулнă çав А.М.Леонтьев. Пултаруллă та пуçаруллă ăста, вăл хăйĕн ĕçне тӳрĕ кăмăлпа туса пырать. Пархикасси патĕнчи уйра агротехника ыйтнинчен пăрăнмасăр, кашни сантиметрне виçсе тенĕ пек, сортлă улмуççисем, çырла тĕммисем ларттарать. Пысăк тухăçлă пахча çимĕç парникĕсем тутарать. Купăста, помидор, баклажан калчисене илме 40-50-мĕш çулсенче таврари ялсенчен, Шупашкартан çынсем йышлăн çӳренĕ.



Темрен те укçа тума пултарнă теççĕ Афанасий Михайлович. Сăмахран, Кĕрнече вăрманĕнчи колхоз утарĕнче вăл хурт-хăмăр ĕрчетет. Пылĕ ĕç кунĕпе салатмалăх та çитнĕ. Е тата сахăр кăшманĕнчен хатĕрленĕ патокăран эрех тутарса («паттă эрехĕ» тенĕ) уявсем чух халăха пĕчĕккĕн суттарать. Пĕр литр эрех туй тума та çитнĕ тет çав çулсенче. Кĕрекери хăнисене те ӳсĕр пулма паман Афанасий Михайлович, «ĕçкĕсене собрани пек ирттерет»,- тесе шӳтленĕ унăн пиччĕшĕ, кил хуçи çынсемпе калаçнине шута илсе (сĕтел çинче пĕр кĕленче ларнă). Ĕç дисциплини садра çирĕп пулнă, унта ĕçлекенсем кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче те килĕсене кайман, хĕвел анаспа тин ĕçе вĕçленĕ. Вĕсем валли садра вăрçă çулĕсенче ятарласа кашни кун çăкăр пĕçерессине йĕркеленĕ. Ку ĕçе туса пыма Я.М.Леонтьев кинне Александра Никифоровнăна шанса панă.

Вăрçă вăхăтĕнче улма-çырла, кишĕр, помидор, хăяр ӳстерсе сутса «Çĕньял» колхоз танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тунă çĕре 100 пин тенкĕ хывнă. Колхоз председателĕ Н.Е.Ильбаторкин ячĕпе И.Сталин тав телеграмми янă. Унсăр пуçне садра ӳстернĕ махоркăна миххи-миххипе çар чаçĕсене, фронта ăсатнă. Пурте «Все для фронта» лозунгпа ĕçленĕ.

1946 çулта А.М.Леонтьева та «1941-1945 çулсенче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн» медаль панă.

**Т.ВЕРЕНДЕЕВА.**

**Çĕньял колхозăн садпа пахча-çимĕç бригади, 1942 çул. Малта пыракансем: Семен Асафов (7 кл.), Лев Кульков (8 кл., эвакуаципе килнĕ). Ларакансем: В.А.Любимова (Суркова), А.М.Леонтьев, бригадир-садовод М.П.Олинова (Сорокина), Т.К.Сурков (платник, хуралçă). Тăракансем: Е.В.Олинова, М.А. Леонтьева, Ак. Ильина, Л.А.Кулькова (эвакуаципе килнĕ), З.С.Яруткина.**

(Вĕçĕ çитес номерте.)

(Малалли. Пуçламăшĕ 122-125-мĕш номерсенче.)

Галина ЦВЕТКОВА

# ÇӲППИ

Калав

Тепĕр кунне Петĕре вăрçа ăсатрĕç. Çӳппие çав кун бригадир ирех ытти хĕрарăмсемпе пĕрле утă çулма илсе кайнăччĕ. Сывпуллашаймарĕ улталаннă хĕр хĕрӳллĕ «савниййĕпе». Тепĕр тăхăр уйăхран Çӳппин хĕр çуралчĕ. Каснă-лартнă Петĕр. Çĕмĕрт пек хуп-хура куçĕсемпе амăшĕ çине чăрлаттарса пăхать. Петĕр вара... панă сăмахне тытмарĕ. Мĕн вăрçăран тавăнииччченех кĕтрĕ çамрăк хĕрарăм почтальон хăйне «савниййĕнчен» çыру тыттарасса. Кĕтсе илеймерĕ.

Шăтнă курăк ӳсет çав. Мăян яшкипе çăка, шĕшкĕ кăчки, амăшĕ çуркуннепе юртан тасалнă çĕр улми ани çинчен пухса килнĕ крахмал çисех ураланчĕ пĕчĕк Анюк. Патак пек çинçе урисемпе хĕллепӳртре, çулла урамра çатлаттарса çӳрерĕ. Иртен-çӳрен:

- Хĕрачи, яту мĕнлеха сан?- тесе ыйтсан:

- Вĕлтрен,- тетчĕ çылăхсăр чун, çав сăмахăн тискер пĕлтерĕшне ăнланмансскер.

Анюк тесе ăна амăшĕ кăна чĕнетчĕ çав, анчах ăна сайра-пĕрре кăна куркалатчĕ хĕрача. Ялан ĕçреччĕ мĕскĕн хĕрарăм, ашшĕ вăрçа кайнăранпа пĕтĕм çемйине хăй ĕнси çине илнĕскер. Кукамăшĕ те, вуникĕ çулхи куккăшĕ те «вĕлтрен» тесе чĕнетчĕç хĕрачана, вĕсене кура вăрăм чĕлхеллĕ кӳршĕ-аршă та. Пĕррехинче ăна, амăшне, Шăмăршăна вăрман касма янăччĕ, кӳршĕ ачисем кула-кулах хăяр çине манка сĕрсе панăччĕ. Киленсех çинĕччĕ ăна Анюк. Юлашкинчен, лешсем хырăмĕсене тытса ахăлтатса кулнине пăхмасăрах: «Сăпаççипă»,- тенĕччĕ.

Петĕр вăрçăран таврăннă чух Анюк тăваттăраччĕ. Анчах, амăшĕ шантарнă пек, уппа-уппа тумарĕ ăна ашшĕ, халиччен нихăçан та çисе курман, çăвара хыпсан çăтса ямалла тутлă канихветпа пĕремĕк çитермерĕ Анюк хăйĕн ача иккенне пĕлсен, çак хуп-хура питлĕ, кукамăшĕн тĕссĕрленнĕ тĕртнĕ кĕпине сӳтсе çĕлесе панă вăрăм кĕпеллĕ хĕрачаран пăрăнса çӳреме тăрăшрĕ. Çӳппине ăнсăртран хирĕç пулса çапăнса иртсе кайсан та сăмах хушмарĕ, хăйне ăна курман-илтмен, палламан пек тыткаларĕ.

Шăлне çыртса чăтрĕ Çӳппи çак мăшкăла, хăйĕн пурнăçне пĕр шелсĕр çапса хуçнă арçынна манма тăрăшрĕ, çĕрне-кунне пĕлмесĕр колхоз ĕçĕнче çӳрерĕ. Анчах чĕре чул мар çав, чул та выртсан-выртсан тĕпренме, катăлма пуçлать те, çын чĕри ăçтан чăттăр. Ĕçкелеме, арçынсемпе явăçма пикенчĕ Çӳппи, ячĕ тахçанах кайнăскер, пĕтнĕ пуçăм пĕттĕрех терĕ пуль.

✿ ✿ ✿

Ялти чи хӳхĕм хĕре, хвершăлта тăракан Варука качча илет Петĕр. Паян туйне лартаççĕ. Вăрçăччченех трактористта вĕренсе тухнăскере, ăна вăрçă хыççăн та хăйĕн тракторĕ çине лартас терĕç. Тĕреклĕ пурăнать Петĕрсен килйышĕ, ашшĕне куçĕ начар пирки вăрçа та илмен. Çитменнине, вăрçă вăхăтĕнче вăл колхоз председателĕнче тăнă. Витре сĕтлĕ ĕни, çичĕ-сакăр сурăх, картиш тулли кайăк-кĕшĕк вĕсен килкартинче. Вăрçă умĕн хыр пĕренесенчен купаланă ултă кĕтеслĕ пӳртне хĕç-тимĕр витсе хĕрлĕ тĕспе сăрланă. Выльăх-чĕрлĕхĕ те ăшă витесенче хĕл каçать.

Туй арăмĕсем юрлани-ташлани Çӳпписен пӳртне те илтĕнет. Пуçа минтерпе хупласа выртни те пулăшмасть. Пĕтĕм тĕнче Петĕр туйĕнче сикет тейĕн. Чĕри кăкăрĕнчен тухса тарас пек тапать Çӳппин, чун ыратăвне лăплантарас тесе виçĕ эрнене яхăн пĕр урă кун курмасăр «аншарлипе» айкашни те пулăшмасть. Ăçта та пулин эрех юлман-ши тесе пушă кĕленчесен тĕпĕсене тĕрĕслесе тухрĕ вăл. Çук вĕт. Юлашки вăхăтра часчасах чĕтрекен пулнă алли тин тытнă пушă кĕленчене те йăтса тăраймарĕ, вĕçерĕнсе ӳкнĕскер, чăлан урайĕ тăрăх кăлтăртатса кусса кайрĕ, хĕррипе шай каяш шывĕпе тулнă тăм чӳлмек патне пырса çапăнса саланчĕ.

- Ы-ых! Çав эсреле, çав кив аçам пыйтине! Татах ĕçсе тăранман-и вăл! Пĕтме маннăскер!- кăшкăрса ячĕ кăмака çинче выртакан асат хуçнă карчăк. Шăп çав самантра алăкран иртенпе ăша пĕр тĕпренчĕк апат яман, выçăпа касăхнă Анюк кĕрсе тăчĕ.

- Анне, ман питĕ апат çиес килет, питĕ-питĕ пакки ыратать,- тесе пăхрĕ вăл арпашăнчăк çӳçлĕ, пĕрмай ĕçнĕрен шыçăнчăк питлĕ амăшĕ çине.- Пакки выçнă ман...

- Вĕлтрен яшки пĕçерсе çитересчĕ хуть. Юхха! Йыт ами!- кĕрлет кăмака çинчи.- Пĕтĕм ял кулать пирĕнтен. Лекçей те çак намăса чăтаймасăр, сана пулах Çĕпĕре çĕр кăмрăкĕ кăларма тухса кайрĕ. Мĕн тĕрлĕ ачаччĕ. Шкул хыççăн тракториста вĕренме кĕрес тетчĕ, кин кĕртĕп теттĕм,- йĕрсе ячĕ хайхи.

- Анне, ман апат çиес килет,- пырса туртрĕ амăшĕн саппун аркине пĕчĕк хĕрĕ.

- Апат?- тĕлĕннĕ пек ыйтрĕ Çӳппи.- А-а, апат. Атя, Анюк, атя. Аçу патне каятпăр. Унăн тем те пур. Вăл пуян,- каласнă хушăрах вăрçăччен хăйне Петĕр парнеленĕ шурă паттис тутăрне кăларса çыхрĕ вăл арчаран.

(Малалли пулать.)

✿ Пушар хуралĕ асăрхаттарать

## ВУТ-ÇУЛĂМ АЧА ВĂЙИ МАР

Пушар хăрушсăрлăхĕн чи ансат йĕркисене пăхăнманни чылай чух пысăк инкек патне илсе çитерет. Çав сăлтава пула çынсен кил-çурчĕ кĕлленет, пушарта çын çунса е тĕтĕмпе чыхăнса вилнин тĕслĕхĕсем те пур.

Палăртмалла, çынсен килĕнче вут-çулăм мунчаран е лаçран пуçланни тăтăшах тĕл пулать. Вĕсенчи кăмакасем, мăрьесем юсавлă марри, электричество пралукĕсем кивелсе çитни, кăвайт çунтарнă чухнехи асăрханусăрлăх - шăпах çак сăлтавсем тĕп вырăнта тăраççĕ. Тата çав лаççемпе мунчасене пурăнмалли çуртпа юнашартарах лартма хăтланни те тĕрĕс мар, алхасакан çулăм тӳрех аталанса каять, кил-çурта пысăк сиен кӳрет.

Тĕслĕхсем илĕпĕр. Октябрĕн 15-мĕшĕнче Мăн Маркара Ю.Гавриловăн килĕнче электричество пралукне тĕрĕс мар сыпăнтарнă пирки пушар тухнă, 9х12 метрлă пурăнмалли çурт, сарай тĕппипех çуннă. Унсăр пуçне кӳршĕсен шифер витнĕ пӳрт тăрри сиенленнĕ. Октябрĕн 24-мĕшĕнче Чĕркашри Н.Макаровăн мунчинче каллех электропроводка юсавсăррине пула вут-çулăм тухнă, мунчасăр пуçне кирпĕч сарая, выльăх усрамалли витене, пурăнмалли йывăç çурта сиен пулнă. Кун пек тĕслĕхсем татах илсе пама пултаратăп. Анчах та статистика çакна çирĕплетет: кăçал кăна кăмака е мăрье юсавлă мар пирки районта 14 пушар пулнă, çынсем пин-пин тенкĕлĕх тăкак тӳснĕ. Кăмакари çунакан вутта никам та пăхса-асăрхаса тăман пирки 6 кил-çурт кĕлленнĕ. Электропроводка юрăхсăррине пула 20 хутчен пушар тухнă. Сӳнтермен пирус тĕпĕсене хăварни, шăрпăкпа, çуртапа тĕрĕс мар усă курни те час-час инкек патне илсе пырать, çавăн пирки кăçалхи 10 уйăхра тухнă пушарсен шучĕ вăтăр пĕрре çитрĕ.

Хаçат вулакансене тата тепĕр хут çапла асăрхаттарса калани ытлашши пулас çук:

**- кăмакасем ялан юсавлă пулмалла, енчен вĕсем йывăç стена çумĕнчех-тĕк, ку вырăнсене çунман материалпа картламалла;**

**- мăрьесене вăхăтра тасатни, штукатурка туни тата шуратни кирлĕ;**

**- кăмака анинчен урайне кăвар сиксе ӳкесрен сыхланма металл листи сармалла;**

**- пӳрт тăрринчи йывăç конструкцисем мăрьерен аяккарах пулччăр;**

**- çунакан кăмакана никамсăр ан хăварăр, ачасен аллине шăрпăк лекесрен сыхланăр;**

**- кăмака хутса янă чух бензинпа, краççынпа тата ытти çав йышши хăвăрт хыпса илекен материалсемпе усă курма юрамасть.**

Кусем пĕтĕмпех - питĕ ăнланмалла тата ансат правилăсем. Анчах хăшне те пулин кулленхи пурнăçра пăхăнмасан - вут-çулăм тухасса кĕтсех тăр. Вара ваттисем каларăш “Чавса çывăх та - çыртма çук”, тенĕ пек пулса ан тухтăр.

Электрооборудованипе усă курнă чухнехи асăрхану правилисене те манăçа хăварни вырăнсăр. Пралук карас пулсан специалиста чĕнмелле, мачча тăрринчен илсе кайнă чух пралукне металл пăрăх витĕр ямалла. 15 çул каярах карнă пралуксене вăраха ямасăр çĕннипе улăштармалла. Халăхра “жучок” текен предохранительсемпе ан усă курăр. Çак тата ытти правилăсене куллен пăхăнсан кăна пушар тухас хăрушлăх пулмĕ.

**А.ПАВЛОВ,**
**районти пушар надзорĕн инспекторĕ.**

✿ Спорт

## СПАРТАКИАДА ШУЧĔПЕ

Ишлейре 2004-2005 вĕренӳ çулĕнчи Спартакиада шучĕпе вăтам шкулсенче вĕренекенсем хушшинче мини-футбол турнирĕ иртрĕ. Унта пĕтĕмпе 14 команда хутшăнчĕ.

Финала ăмăрту хуçисем, Кӳкеçри 1-мĕш тата Çĕньял-Покровски шкулсен спортсменĕсем тухрĕç. Ишлейсем ăмăртура малти вырăна йышăнчĕç, иккĕмĕшĕнче Кӳкеççем, Çĕньял-Покровски командиsi виççĕмĕш вырăнта.

✿ ✿ ✿

Кӳкеçри шкул-интернатра сĕтел çинчи теннисла выляканcем вăй виçрĕç. Унта та вăтам шкулсен командисем Спартакиада шучĕпе кĕрешрĕç. 12 командăран чи вăйлисем Чăрăшкассисем пулчĕç. Вĕсем умлă-хыçлă икĕ хут çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçрĕç. А.Николаев, Н.Гаврилова тата С.Савельев спортсменсенчен тăракан командăна физкультура учителĕ А.Пономарев ăмăртăва хатĕрленĕ.

Призлă иккĕмĕш вырăна Атайкасси вăтам шкулĕн команди йышăнчĕ, ун составĕнче В.Орлов, А.Ефимова, А.Ермолаев теннисистсем пулчĕç, тренерĕ - Н.Беляков.

Виççĕмĕш вырăна Çĕньялсем тухрĕç. А.Кузьмин, О.Яковлева, М.Сергеев вăйăçăсене ăмăртăва В.Борисов учитель хатĕрленĕ.

**В.ГАВРИЛОВ.**

## Ăшшăн саламлатпăр

Мăн Пӳкасси ялĕнче пурăнакан юратнă аннене, аппана, хаклă çыннăмăра – Любовь Андреевна ЦВЕТКОВАНА çуралнă кун ячĕпе чĕререн саламлатпăр.

Чи хаклă çын эс пирĕншĕн, аннеçĕм.
Салам сăмахĕсем пиртен илсем.
Тавах вăй-хал, ăс-тăн пире панишĕн.
Сана ялан юратнине пĕлсем.
Телей те ăнăçу пĕрле çӳретĕр,
Чир-чĕр ан тивтĕр çирĕп сывлăхна.
Чунра та, чĕрере те юн вĕретĕр.
Мăнукусем хавхаланттарччăр кăмăлна.
Салампа – йăмăкĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕ,
мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.

✿ Кулăш - ĕçре пулăш

*- Эсир ĕçетĕр пулас?*

*- Ĕçетĕп.*

*- Эрех этем ĕмĕрне çурмалла кĕскетнине пĕлместĕр-им?*

*- Мĕнле тата?*

*- Çапла. Халĕ эсир миçе çулта?*

*- Хĕрĕхре.*

*- Вăт, эсир ĕçмен пулсан, халĕ сакăрвуннăра пулнă пулăттăр.*

## ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

**Администрация Чебоксарского района** объявляет конкурс на замещение вакантной муниципальной должности муниципальной службы – главный специалист отдела экономики и управления имуществом администрации Чебоксарского района.

Для участия в конкурсе необходимо представить в управление делами, организационно-контрольной и кадровой работы администрации Чебоксарского района следующие документы:

- заявление на имя главы администрации Чебоксарского района;
- личное дело, листок по учету кадров;
- фотографию;
- документ, удостоверяющий личность (по прибытии на конкурс);
- документы, подтверждающие необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию (выписку из трудовой книжки, копии документов об образовании, повышении квалификации, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы);
- медицинскую справку.

Заявление на участие в конкурсе принимаются ежедневно с 8[00] до 17[00] часов кроме субботы и воскресенья до 15 ноября 2004 года в кабинете №№ 6,7 администрации Чебоксарского района.

**Справки по телефону: 2-10-47, 2-16-91.**

**Частное охранное предприятие «АЛЕКС-Ч», лиц. № 25/21 от 05.10.04, выданная Ленинским РОВД г.Чебоксары предоставляет сл. услуги:**
**- охрана объектов;**
**- вооруж. сопровождение грузов.**
**Адрес: г.Чебоксары, ул. Ярославская, 76, оф. 201.**
**Тел.: (8352) 62-29-38.**

Комиссия по проведению аукциона по продаже овощехранилища сообщает, что аукцион с открытой формой подачи предложений о цене по продаже овощехранилища, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, с.Ишлеи, пер. Санаторный, д. 5, не состоялся в связи с отсутствием заявок.

*Конкурсная комиссия.*

Куплю живым весом бычков, коров, телок. Тел.: 8-903-389-30-36.

Продаю шифер, цемент, рубероид, керамблоки, колодезные кольца диам. 1,0. Возможна доставка, без выходных. Тел.: 31-5-27 (Ишлеи).

Продаю шифер, цемент, сруб, мох, керамблок с доставкой и без выходных (Ишлеи). Тел.: 3-15-85.

Продаю пиломатериал любой и на заказ, доставка, отходы пиломатериалов, дешево. Тел.: 2-38-66, 8-903-389-14-00.

Продаю керамблоки с доставкой. Телефоны: 8-903-345-05-56, 2-14-75, 2-50-37.

✿ ✿ ✿

Коллектив РГУ «Кугесьский дом-интеранат для престарелых и инвалидов» выражает соболезнование работникам дома-интерната О.В.Игнатьевой и В.В.Филипповой по поводу кончины

**ОТЦА.**

МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» выражает глубокое соболезнование старшей медицинской сестре стоматологического отделения Фоминой Алевтине Васильевне в связи со смертью

**ОТЦА.**

ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
ГУП “Кугесьский издательский дом”,
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики

Газета зарегистрирована в Приволжском окружном межрегиональном территориальном управлении МПТР РФ 17 декабря 2002 г. ПИ №18-1109

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

ВрИО гл. редактора А.А.ПЕТРОВА

Дежурные по номеру: Г.А.Егоров, М.В.Никитина

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, ответственный секретарь, фотокорреспондент - 2-13-80, отдел сельского хозяйства - 2-21-88, компьютерный отдел - 2-12-59, отдел писем - 2-21-88, бухгалтерия - 2-12-66. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер набран, сверстан и отпечатан в ГУП “КуИД”. Тел.Ёфакс: (8240) 2-13-83. E-mail: prinĕ@chebs.cap.ru

Печать офсетная. Объем 2,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 29.10.2004 г. в 16 час. 00 мин.
Заказ №1746 . Тираж 1635.
Индекс газеты - 54820.